*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

ХЫПАР

# ХРЕСЧЕН САССИ

ЭРНЕ КУН

19 (2431) №
Хакĕ ирĕклĕ
1991 çулхи ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

2014, пуш, 14

КАНУ КУНĔН КĂЛАРĂМĔ

ЧĂВАШ ЕН | ЯЛ-ЙЫШ | КИЛ | ХŬТЛĔХ | СЫВЛĂХ | ТĔПЕЛ

ШУХĂШ

## «Пĕчĕк шуйттан»...

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М. Игнатьев Шăмăршă районне ĕçлĕ çӳл çӳревпе килсен сывă пурнăç йĕрки пирки çивĕч калаçрĕ.

"Çынсем эрех хакĕ чылай ӳснипе "фанфурик" туянма тытăнчĕç. Çак "пĕчĕк шуйттанăн" сиенĕ эрех ĕçнинчен те пысăкрах, – терĕ республика ертӳçи. – Çавăнпа та "фанфурик" сутнине эпĕ хытă сивлетĕп, вырăнти влаçран та çак усал шĕвеке сутакансене хирĕç тӳсмелле мар лару-тăру туса хума ыйтатăп".

Ăçта сутаççĕ-ха халăхра "фанфурик" тесе ят панă "пĕчĕк шуйттана"? Лавккасенче тата аптекăсенче. "Ĕç-ĕç, Ваççа, ан урăл, йӳнĕ шĕвекпе пуçна минретсе пурнăç йывăрлăхĕсем çине ала сул...»

Фанфурик сутни пĕриншĕн бизнес, укçа кĕмелли çăл куç. Халăхшăн вара - ахаль те вăрăм мар пурнăçа тата та кĕскетмелли наркăмăш. Хамăр ирĕкпех пĕтеретпĕр вĕт пурнăçăмăра, ял-йышăм! Фанфурик ĕçсе çынсем ухмахланнине, çамрăксем тĕрĕс мар çул çине тăнине, ватăраххисем пенсие тухиччен "хĕреслĕ яла" ăсаннине курмастпăр та илтместпĕр те-ши?

Хальхи вăхăтра ял тăрăхĕсенче пухусем иртеççĕ. Кашни ялта тенĕ пекех демографи ыйтăвне çивĕч çĕклеççĕ, ачасем сахал çуралнишĕн, çынсем вăхăтсăр вилнишĕн пăшăрханса калаçаççĕ. Анчах пурнăçăн тĕп тăшманне – ĕçкĕ-çикĕпе иртĕхнине – тĕп тăвасси пирки шавласах каймаççĕ. Сутаççĕ-и ялта фанфурик? Сутаççĕ. Мĕншĕн чармастпăр? Çак "пĕчĕк шуйттана" сутакансене, сăмакун сутса ачасен куççулĕ çинче пуякансене çăварлăхлама май çук-ши вара?

– Ятарлă саккун кирлĕ, – теççĕ полицире ĕçлекенсем. Саккунĕсем нумай та, пурнăçлаканĕсем сахалрах-çке. Ăçта, мĕн патне çитсе ӳкĕпĕр каплах пурăнсан, тăванăмăрсем?

**Иван АНАТКАС.**

## Пуш уйăхĕн 31-мĕшĕччен – малтанхи хакпа

***Хисеплĕ вулакансем! «Хыпар» Издательство çурчĕн кăларăмĕсене 2014 çулăн II çурринчен илсе тăмашкăн пуш уйăхĕн 31-мĕшĕччен малтанхи хаксемпе çырăнтараççĕ.***

КĔСКЕН

**Иртнĕ çул республикăн агропромышленноç комплексне пулăшма бюджетран 2,45 млрд тенкĕ уйăрнă. Кăçал та уйăрĕç. Тĕпрен илсен ăратлă выльăх, чĕпĕ кăлармалли çăмарта, талăкри чăх чĕппи туянма, ял хуçалăх организацийĕсен сĕт лайăх антаракан ĕнисене, ятарлă хуçалăхсен ăратлă ама выльăхне тăрантма куçарĕç.**

**Пĕлтĕр «Чăваш Республикинчи ялсене 2013 çулччен аталантарасси» программине пурнăçламалли тапхăр вĕçленчĕ. Çавна май ял çыннин пурнăçне лайăхлатас тĕллевпе кăçалтан «Чăваш Республикинчи ял территорийĕсене 2014-2020 çулсенче аталантарасси» программа ĕçе кĕрет. Унпа килĕшӳллĕн çамрăк çемьесемпе специалистсене тата граждансене çурт тума (туянма) мĕн пур тăкакăн 70 процентне саплаштармалăх социаллă тӳлевпе тивĕçтерме тытăнаççĕ. Чи малатанах унпа нумай ачаллă çемьесем усă курма пултарĕç. Кунсăр пуçне граждансене вырăнта пуçару туса ĕç пуçлама грант уйăраççĕ, яла аталантарма (тĕрлĕ енĕпе Раççей конкурсне, спорт ăмăртăвне, ытти ыйтăва татса пама) укçа параççĕ. Çав тӳлевсемпе грантсене тивĕçме ял тăрăхĕсене социаллă пурнăçпа инженери тĕлĕшĕнчен хăтлăлатмалли, вĕсен строительствине, комплекслă, пĕр çĕререх тата АПК объекчĕсемпе çыхăнтарса пурнăçламалли проект пулмалла, пысăк технологиллĕ производствăра хушма ĕç вырăнĕсем йĕркелемелле.**



**ПАЯН** кун тăршшĕ 11 сехет те 41 минут. Уйăх тулса пырать. Алтатти кунĕ мĕнле çу та çаплах пулĕ тенĕ. Кунĕ ырă тăк – çу тăршшĕпех лайăх пулĕ. Юрлă çумăр çуни – çу йĕпе-сапаллă тăрасса, çил çурçĕр енчен вĕрни – çу сивĕ килессе. Алтатти кунĕнче чăх ĕçмелĕх шыв пулсан курăк ăнса ӳсĕ.

**ЫРАН** – Хветут кунĕ. Тумла пăрĕ вăрăм пулни – çур вăраха каясса.

**ВИÇМИНЕ** – Курак Карачăм кунĕ. Кураксем вĕçсе килеççĕ. Кураксем хăйсен кивĕ йăвинех йышăнсан савăк çуркунне пулĕ, унтан çине-çинех вĕçсе тухсан – сивĕ кунсем татах пулĕç. Кураксем вĕçсе килсен уйăхран юр кайса пĕтет.

ЫЙТУ – ХУРАВ

## Куçарса лартма кирлех-ши?

**? Калăр-ха, тархасшăн, мĕншĕн калчана куçарса лартмалла. Эпĕ иккĕмĕш çул ĕнтĕ помидорпа пăрăç вăррине торф стаканĕсенче çитĕнтеретĕп, çуркунне тӳрех теплицăна куçарса лартатăп. Тухăçĕ аптрамасть пек.**

**Ирина СЕМЕНОВА. Шупашкар.**

Калчана куçарса лартни хăш енчен аван-ха? Пĕрремĕшĕнчен, пĕчĕк лаптăкрах ытларах калча туса илме май килĕ. Иккĕмĕшĕнчен, тĕп тымара кĕскетсе лăс тымара тата лайăхрах аталанма пулăшĕ. Уйрăм стаканра çитĕнтерни килĕшет тĕк малашне те çаплах тума пултаратăр. Ватă çынсем ытларах чухне калчана ешчĕксенче çитĕнтереççĕ. Калча тымарĕсем пĕрпĕринпе çыхланса каясран ешчĕкри çĕре темиçе хутчен тăваткăлласа касаççĕ, кашнине 10х10 см яхăн лаптăк тивĕçмелле. Çакăн пек тунипе калча тымарĕ çăра та çирĕп çитĕнет, куçарса лартнă чухне çĕрĕ те тăкăнмасть.

Помидор калчине куçарса лартнă вăхăтра пирвайхи çулçă туни таран хуплама юрать, пăрăçăн тымарĕ вăйлах мар, çавăнпа ăна малтанхинчен кăшт тарăнрах лартмалла.

## Çаралсах юлчĕ

**? Пĕлтĕр чип-чипер курăнакан крыжовникăн çулçи çу варринче тăкăнма пуçларĕ. Çаралсах юлчĕ. Мĕнпе çыхăннă-ши ку?**

**Зинаида ИВАНОВА. Куславкка районĕ, Тĕрлемес.**

Крыжовника тапăнакан сарă хуртпа çыхăннă курăнать. Çу тăршшĕнче вăл икĕ ăру кăларса ĕлкĕрет. Уйрăмах иккĕмĕш ăрăвĕ усал, вăл шăпах çырла пиçес умĕн тухать. Çулçа хурт çинипе çырли вĕтелсе тăкăнать.

Кĕркунне ӳсен-тăран тавраШĕнчи çĕре чавса кăпкалатни хĕл каçма хатĕрленекен хурт йышне чакарать. Çурпа çу тапхăрĕнче тĕм айне материал сарса крыжовника силлеме сĕнеççĕ: хурчĕ çĕре ӳкĕ. Çу уйăхĕн вĕçĕнче – çĕртме пуçламăшĕнче сывлăм е çумăр хыççăн крыжовника кĕлпе сапмалла (пĕр тĕме – 500 г), уйрăмах çулçăн тӳнтер енне. Çавăн пекех эрĕм, табак, ыхра шывĕпе пĕрĕхтерме юрать. Ку çителĕксĕр пулсан кăчка ларнă тапхăрта Битоксибациллин, Лепидоцид биопрепаратсемпе сапмалла.

***✓ Калча ан чирлетĕр тесен вăрлăха акиччен 20 минутлăха йăваш марганцовка шывĕ çине ярса лартмалла. Унтан таса шывпа çумалла та 12 сехет таран алоэ сĕткенĕпе хутăштарнă шывра (1:1) тытмалла. Кайран вăрлăха нӳрлĕ пир татăкĕ çине хурса çиелтен марльăпа витмелле. Татăка ирпе-каçпа шывпа йĕпетмелле, 2-3 кунтан вăрлăх сăмсаланĕ. Вара ăна лартма та юрать.***

***✓ Темиçе çул выртакан кивĕ вăрлăха пӳлĕмри температура таран ăшăтнă Циркон шĕвекĕнче (300 мл шыва 1-2 тумлам) 8-16 сехет шӳтермелле.***

ВУЛАКАН СĔНЕТ

**Юр кайса пĕтиччен улма-çырла йывăçĕсене хурт-кăпшанкăран хӳтĕлесе бордос шĕвекĕпе сирпĕтмелле.**

## Çырла тĕмĕсене – мунча

Хĕл вĕçленнĕ-вĕçленмен, юр кайса пĕтиччен, кăчкă вăраниччен çырла тĕмĕсене (хурлăхан, крыжовник, хăмла çырли) дезинфекцилемелле. Химисĕрех. Вĕреме кĕнĕ шывпа сапмалла. Хама илес пулсан, пысăк хуранпа 100 литра яхăн шыв çакса яратăп. Вĕреме кĕртетĕп. Шыва витрепе пахчана йăтса лейкăна янă тĕле вăл кăшт сивĕнет. Тĕмĕсене сапма пуçланă тĕле 70-80 градус юлать. Шăпах çавăн пекки кирлĕ те. Хурт-кăпшанкă çăмартисемпе микробсене пĕтерет вăл. «Çывăракан» кăчкăшăн ку сиенлĕ мар. Çапла майпа эсир пахчăрти тĕмĕсене пыйтă-сăвăс, хурт тавраШĕнчен хăтарма пултаратăр. Уссине çулла питĕ лайăх туйса илетĕр. Чи кирли кунта – «мунча» кунне вăхăтра йĕркелесси.

**Валентина СЕМЕНОВА. Çĕрпӳ.**

***

Пӳлĕмри чечексене вĕт шăна тапăннă-и? Ахăртнех чӳлмекри çĕр ытла нӳрĕ. Ун пек чухне йăваш марганцовка шывĕ туса ӳсен-тăрана пĕрĕхтеркĕчпе сирпĕтмелле. Чылай чухне çапла 2-3 хут тусан шăнасем пĕтеççĕ. Чечеке эрнере пĕр хут шăварни çителĕклĕ.



| ÇАНТАЛĂК | Шупашкарта | Вăхăт | 14.03 | 15.03 | 16.03 | 17.03 | 18.03 |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | Температура, °C | 2-4 сехетре | –3 | 0 | 0 | –6 | –7 |
| | | 14-16 сехетре | +4 | +3 | +4 | +2 | +1 |
| | Юр çăвать | | * | 🌧 | 🌧 | – | * |
| Атмосфера пусăмĕ, мм. | | | 733 | 730 | 728 | 733 | 730 |

КИЛ КАРТИ

**Сысна ашĕ тутлă пултăр** тесен ăна тутлă çитермелле. Тымар çимĕçе, тĕш тырă культурисене, клевер, люцерна, пăрça йышшисене аван çиет. Çаксем пурте аш-какая техĕмлĕ тутă кĕртме пулăшаççĕ.

Тулă хывăхĕ, çĕр улми, крахмал юлашки, хура тул, куккурус, кăшман нимĕрĕ аш тутине япăхлатаççĕ. Çавăнпа вĕсене ытла нумай çитерме юрамасть, анчах пач усă курмасăр та май çук, мĕншĕн тесен вĕсем тутă тытнипе паха.

Аш тутине япăх витĕм кӳрекенсен шутне çавăн пекех пулă, турантă, соя кĕрет.

ХЎТЛĔХ ЧĂВАШ ЕН ЯЛ-ЙЫШ КИЛ СЫВЛĂХ ТĔПЕЛ

## КĔСКЕН

**Республика ертўçи Михаил Игнатьев Шупашкар хулине никĕсленĕренпе – 550, Чăваш автономи облаçне туса хунăранпа 100 çул çитнине уявлама хатĕрленес енĕпе ĕçлекен йĕркелў комитечĕн Мускавра иртнĕ черетлĕ ларăвне хутшăннă. Тĕп мероприятисен планĕпе килĕшўллĕн 2015-2017 çулсенче 32 объект юсаса çĕнетмелле. Çак тĕллевпе федераци бюджетĕнчен 5554,6 млн тенкĕ уйăрмалла. Республика хыснинчен те укçа хывĕç.**

**Иртнĕ çул республикăра саккуна пăсса эрех хатĕрлекен-сутакан виçĕ ушкăна тытса чарнă. Çулталăк тăршшĕпе 68 пин литр суя эрех, спирт туртса илнĕ.**

## ХАМА ХАМ ТУХТĂР

### Венăсем тухса тăрсан

Юна шĕветме тата юн тымарĕсене тасатма кунне 3 хут ыхра сĕткенне пыл хутăшĕ ĕçмелле (100 мл ыхра сĕткенне 200 мл пылпа хутăштарса 7-10 кун тĕттĕм вырăнта тытмалла). Кунсерен прополис пирĕпе (вĕлле тытакансен пур вăл) компресс тумалла. Вена тухса тăракан вырăнсене пылпа сĕрмелле, унтан хайхи пирпе витсе ăшă япалапа пиелемелле. Çак йĕркене пăхăнмалла: 1-мĕшпе 2-мĕш кун çыхха 1 сехет тытмалла, 3 тата 4-мĕш кун – 2 сехет, 5 тата 6-мĕш кун – 3 сехет, 7 тата 8-мĕш кун – 4 сехет, кайран компреспа çĕрĕпех çывăрма юрать. Хăшĕ-пĕри çапла икĕ уйăх сипленнĕ хыççăн сывалатех.

### Чĕрене лăплантарма

Пускăч витĕр 3 пуç ыхра кăлармалла, ун çине 6 кашăк шур эрех ярса хупмалла, 7-8 кун тăрăлтарса лартмалла. Сăрăхтармалла, 3 кашăк алоэ сĕткенĕ тата 1 кашăк çăка пылĕ хушмалла. Кунне икĕ хут, апат хыççăн, пĕрер чей кашăкĕ ĕçмелле. Хутăша сивĕтмĕшре упрамалла.

2-шер кашăк вĕтетнĕ чĕре курăкĕ (пустырник), мулкач курăкĕ (тысячелистник), валериана тымарĕ хутăштармалла. Унтан ăна тин вĕретнĕ çур литр шыва ярса 2 сехет тăрăлтарса лартмалла, сăрăхтармалла. Кунне 2-3 хут 1/4 стаканшар ĕçмелле.

## КИРЛĔ ПУЛĔ

### Чи усăлли



Гранат çимĕçĕн сĕткенĕ чи усăллă сĕткенсенчен пĕри. Вăл организма усал шыçăран хўтĕлет, чĕрепе юн тымарĕсен чирĕсенчен пулăшать. Тухăç çĕр-шывĕсенче мĕн пур çимĕçĕн патши вырăнне хурса хисеплеççĕ ăна. Пуç кăшăлне те хайхи çимĕç тăррине пăхса тунă имĕш. Авалхи египтянсен тупăкне вилнĕ çынна тепĕр хут чĕртсе тăратас шанчăкпа гранат çимĕçĕ чиксе янă мĕн. Мухаммед пророк хăйĕн вĕренекенĕсене курайманлăхран тата кĕвĕçўрен тасалма гранат çиме сĕннĕ. Китайра туй кунĕнче çамрăк мăшăра ырă сунса ятарласа гранат тĕшши çиеççĕ.

## ЭСИР ЫЙТНĂЧЧĔ

### Пылпа сипленесшĕнччĕ

**? Пылпа массаж туни сиенлĕ тенине илтрĕм. Мĕншĕн? Мăй остеохондрозне мĕнле сиплемелле-ши?**

**Иван МИХАЙЛОВ. Хĕрлĕ Чутай.**

Шăмăпа унăн кăмăрчакĕсем йĕркеллĕ аталанма пăрахнипе пăсăлса улшăннине, хулăмланса хытнине эпир остеохондроз тетпĕр. Остеохондроз чухне пылпа массаж туни усăллă. Пыл ўт-пĕве, шалти органсене, сыпăсене, организма пĕтĕмĕшле ырă витĕм кўни паллă. Массаж юн çаврăнăшне лайăххатма, тĕртемсенчи тăвара кăларма пулăшать. Массаж хыççăн ўте çумалла, унсăрăн ўт çине тухнă сиенлĕ япаласем каялла кĕрсе кайма пултараççĕ. Кайран нўретекен кремпа сĕрмелле. Массаж хыççăн шăлан çырли чейĕ ĕçни аван. Ўт-тире сиенлесрен массажа кун сиктерсе тумалла. Анчах ку меслет пурне те каймасть. Калăпăр, операци хыççăн, çие юлсан, пĕсехе парĕн ĕçĕ пăсăлсан, ват хăмпипе пўреве чул пулсан, юн çывăраслăхĕ пăсăлсан, температура хăпарсан, варикозпа тромбофлебит, астма, тĕрлĕ шыçă, аллерги, ўт-тир инфекцийĕн, чĕрепе юн тымарĕсен чирĕсем чухне, туберкулезпа е ракпа нушалансан.

Халăхра остеохондрозран çак мелсемпе сипленеççĕ:

Хутаçлă йўçĕ хĕрлĕ 6 пăрăç вăррине кăларса аш арманĕпе е блендерпа вĕтетмелле. 100 мл нашатырь спирчĕ тата 200 мл сырлан (облепиха) çăвĕ хушмалла. Пулнă хутăша лайăх пăтратса 15 кунлăха тĕттĕм вырăна лартмалла. Кашни 2 кунран эмел кĕленчине силлесе тăмалла. Хатĕр настойкăна пилĕкпе мăя сăтăрма усă кураççĕ. Çапла кун сиктерсе тумалла. Сăтăрнă вырăна шарфпа çыхаççĕ.

**Горчица компресĕ.** Горчица порошокне çăра хăйма пек пуличчен вĕри шывпа хутăштармалла. Унтан хут е пир татăкĕ çине сĕрсе ыратакан вырăна хумалла, полиэтиленпа витсе çăм тутăрпа çыхмалла. Ўте чĕпĕтме пуçласанах çыхха салтмалла.

**Йўç кăшман.** Кăшмана теркăласа сĕткенне сăрăхтарса илмелле. Пир пусмана хайхи сĕткенпе йĕпетсе ыратакан вырăна хумалла. Çиелтен çăм тутăрпа çыхмалла.

**Шурă сирень настойки.** Шурă сирень кăчкипе чечекне пĕр тан илсе шур эрехпе (1:10) хутăштармалла. Пĕр эрне таран тĕттĕм вырăнта тытмалла. Сирень эрехĕпе компресс тунипе пĕрлех ăна ĕçме те юрать: кунне 3 хут 30-40 тумлам.

**Ыраш пашалăвĕ.** Ыраш çăнăхне (300 г) чуста пек пуличчен шывпа хутăштармалла. Унтан икĕ пашалу туса духовкăра пĕçермелле. Унпа ĕнсепе мăя хупламалла.

**Хупах çулçипе.** Малтанах хатĕрлесе хунă хупах çулçине вĕтетмелле. Тин вĕретнĕ 1 стакан шыва 1 кашăк çулçă ярса 15 минут лартмалла. Сăрăхтармалла, пусма таткине унпа йĕпетсе 40 минутлăха ыратакан вырăна хумалла.

**Хĕрен сĕткенĕ.** Мăй ыратнă чух усă курмалли чи тухăçлă меслетсенчен пĕри ку. Хĕрен сĕткенĕпе шур эрех (1:1) хутăштармалла. Мăя сĕрмелле. Çакăн хыççăн ăшă япалапа çыхса çывăрма выртмалла.

**Хыр лăсси.** Вĕреме кĕнĕ 1 литр шыва 250 г чухлĕ тин татнă хыр лăсси ярса çур сехет лартмалла, сăрăхтармалла. Хатĕр настойкăна кунне 2 хут апатланнă хыççăн ĕçмелле.

**Упа паланĕ** (бузина). Кĕленчене 2 стакан спирт тата çур стакан упа паланĕ ярса хупмалла. Пĕр эрне таран тĕттĕм вырăнта тытмалла. Ĕнсепе мăя сĕрмелли пулчĕ те.




Потребительский кредит

Звонок по России бесплатный
8 800 200-02-90 | www.rshb.ru
ОАО «Россельхозбанк». Генеральная лицензия Банка России № 3349. Реклама.

г. Чебоксары, Президентский б-р, 31
тел.: 8 (8352) 66-22-06

### Шăршă кĕрет

**? Мĕнле чир чухне çăвартан ацетон шăрши кĕрет?**

**Алексей ПЕТРОВ. Çĕнĕ Шупашкар.**

**Сахăр диабечĕпе** чирлекенсен çăварĕнчен ацетон шăрши кĕме пултарать. Ацетон пурри шăк анализĕнче те палăрать. Унсăр пуçне шăкра ацетон тупăнни **юнра сахăр ытлашши пулнине** те (гипергликеми) пĕлтерет. Ацетон шăршине туйсанах эндокринолог патне каймалла.

**Тиреотоксикоз (пĕсехе парĕн ĕçĕ пăсăлнипе пулакан сиенлĕ япаласем организма наркăмăшлани)** чухне те çăвартан ацетон шăрши кĕрет. Чир паллисем: çын питĕ хăвăрт вĕчĕрхенсе каять, хытă тарлать, чĕри сиксе тухасла тапать. Ўчĕ типет, çўçĕ тăкăнать, алли чĕтреме пуçлать. Апат лайăх çинине пăхмасăрах çын хăвăрт начарланать. Мĕн чухлĕ иртерех сиплеме пуçлатăн, çавăн чухлĕ лайăхрах.

**Пўре чирĕсем** чухне те шăршă кĕме пултарать. Калăпăр, нефроз (пўре клеткисем типсе вилнипе пулакан чир) аталансан. Веществосен çаврăнăшĕ пăсăлать. Ўт тăртанать, шăк тухасси йывăрланать, пилĕк ыратма, юн пусăмĕ хăпарма пуçлать. Чире вăхăтра сипленине нимĕн те çитмест.

**Выçă тытакансен е ялан пĕр еверлĕ начар апат çисе пурăнакансен** те çăварĕнчен хайхи ырă мар шăршă кĕрет. Углевод пыма пăрахнипе организм çусене пайлама пуçлать. Анчах кунашкал майпа начарланни никама та ырă кўмест, мĕншĕн тесен организма наркăмăшлантаракан япаласем пухăнаççĕ. Кун пек чухне ытларах пўре, пĕвер, хырăмлăхпа пыршăлăх тракчĕ шар курать.

## КАМĂН МĔН ЫРАТАТЬ?

**Ангинăран.** 1 кашăк пылпа 1 чей кашăкĕ корица хутăштармалла. Кĕмĕл кашăк çинчен ăна васкамасăр çуласа çăтмалла.

Гвоздика пĕрчине ĕмсе çўрени те хăвăртрах сывалма пулăшĕ.

Тепĕр меслет. 1 черкке шур эрехе 4 тумлам пĕтнĕк, 2 тумлам импĕр, 2 тумлам пихта çăвĕ ярса пăтратмалла. Пусма таткине хайхи хутăшпа йĕпетсе компресс тумалла, 30-40 минут тытмалла.

**Сыпăсем сурсан.** Çемçелнĕ 100 г услам çăва кофе арманĕпе вĕтетнĕ 10 г лавр çулçи порошокĕпе хутăштармалла. Каçхине унпа ыратакан сыпăсене сĕрмелле.

**Ўксе çапăннă, ыраттарнă** вырăнта гематома, шыçă тавраш пуласран йўçĕхнĕ сĕт пулăшĕ. Çав вырăна унпа компресс тумалла е ыраттарнă алла вĕрилентернĕ кĕвелĕк ăшне чикмелле.

**Чир палли (герпес)** тухсанах ăна прополис настойкипе кунне 5-6 хут сĕрмелле.

**Климакс** вăхăтĕнче ал айĕнче пилеш пулни аван. Çур литр коньяка 100 г типĕтнĕ пилеш çырли ярса 2 эрнелĕхе сулхăн вырăна лартмалла. Пилеш эрехне кунне 3 хут пĕрер чей кашăкĕ ĕçмелле. Чĕре лăпкăрах тапма пуçлĕ, тарлама та пăрахар, кăмăл-туйăм лайăхланĕ.

*Асăрхаттарни: халăх сĕнекен сывату меслечĕсемпе усă куриччен тухтăрпа канашласа пăхмалла.*

ЧĂВАШ ЕН ЯЛ-ЙЫШ КИЛ ХŬТЛĔХ СЫВЛĂХ

# ТĔПЕЛ

## КĔСКЕН

**Чăвашстат кăтартăвĕсем тăрăх – республикăра пурăнакансен 53 процентĕ хĕрарăм, вĕсенчен 62 проценчĕ хулара тĕпленнĕ. Вăтам ўсĕмĕ 41,3 çулпа танлашать. Вăтам ĕмĕрĕ – 76 çул. Чăваш хĕрарăмĕсем йышлăрах – 67 процент, иккĕмĕш вырăнта – вырăссем (27 процент), виççĕмĕшсем – тутарсем (3). 1000 хĕрарăмран 219-ăшĕ аслă пĕлўллĕ пулсан, арçынсенчен – 172-шĕ çеç. Сывлăх сыхлавĕпе социаллă пулăшăва хĕрарăмсен тытăмĕ теме май пур, мĕншĕн тесен вĕсенче ĕçлекенсен 87 процентĕ – хĕрарăм.**

**Иртнĕ çул культура учрежденийĕсен ĕçченĕсен вăтам шалăвĕ 11888 тенкĕпе танлашнă, социаллă тытăм ĕçченĕсен – 9579 тенкĕпе, пĕтĕмĕшле пĕлў паракан вĕренў учрежденийĕсенчи педагогсен – 20141, шкулчченхи вĕренў учрежденийĕсен педагогика ĕçченĕсен – 17756 тенкĕпе.**

## СĔТЕЛĔР ТУЛĂХ ПУЛТĂР

### Манна кĕрпипе

**1 стакан манна кĕрпи, 1 стакан кĕвелĕк, 1 стакан сахăр, 2 лимон, 2 çăмарта, 2 кашăк çăнăх, ванилин.**

Манна кĕрпипе кĕвелĕк хутăштармалла, 20 минут кĕтмелле (çак хушăра кĕрпе шўсе çитĕ). Теркăпа лимон хырмалла. Çăмартапа сахăр лăкамалла. Шўнĕ манна кĕрпине лăканă çăмартапа пĕрлештермелле, икĕ кашăк çăнăх, кăшт ванилин хушса каллех пăтратмалла. Хутăша çу сĕрнĕ çатмана ярса çур сехетлĕхе духовкăна лартмалла.

### Пĕвер икерчи

**0,5 кг пĕвер, 2 кишĕр, 2 кашăк çăнăх, пуçлă сухан, çăмарта, ăшалама тип çу, тăвар, пăрăç.**

Пĕвере, сухана, кишĕре аш арманĕпе авăртмалла, тăварпа пăрăç калаттармалла. Çăнăх хушса пурне те пĕрле пăтратмалла. Çăра хăйма евĕрлĕ хутăш пулĕ. Хĕртнĕ çатмана тип çу ямалла, унтан пĕвер хутăшне çўхен сарса енчен енне çаврăнса 5-шер минут ăшаламалла.

## ПĔЧĔК ВĂРТТĂНЛĂХСЕМ

✓ Пулла ăшаличчен 20 минут маларах тăвар калаттарсан вăл вакланса каймĕ.

✓ Сĕт вĕретме лартиччен кастрюле сивĕ шывпа чўхесе илĕр, шăлса ан типĕтĕр – сĕт çунса каймĕ.

✓ Сĕте тĕттĕм вырăнта е çутă кĕмен савăтра упрамалла.

✓ Пыл кĕленчине нихăçан та кашăк е ытти тимĕр япала хăвармаççĕ.

✓ Çатмана çу яриччен малтан кăштах тăвар сапмалла, çу сирпĕнмĕ.

✓ Лавккара пакетпа сутакан типĕ çĕпре япала шуратма аван, хлоркăпа танлаштарсан пусмана та сиенлемест. Çавăнпа та япала çунă чухне порошок вырăнне пĕр пакет типĕтнĕ çĕпре ярса пăхăр.

✓ Тин туяннă эмаль кастрюль ĕмĕрĕ вăрăм пултăр тесен чи малтан унпа тăварлă шыв вĕретмелле, кайран хайхи шывĕпех сивĕниччен лартмалла.

✓ Тумтир çинчи тар йĕрне яма шыва кăштах нашатырь спирчĕ хушмалла (1 л шыва – 1 чей кашăкĕ). Тахçанхи тар йĕрĕсене эрехпе нашатырь спирчĕн хутăшĕпе сăтăрса яраççĕ.

## ЯЛ ИЛЕМĔ – КАПĂР ÇУРТ



Илемлĕ çурт кăмăла кайрĕ-и? Унăн проекчĕпе паллашас тесен «Тăван Атăл» журналăн кăçалхи иккĕмĕш номерне алла илме сĕнетпĕр.

## ЧИПЕРЛЕНЕР-И?

**Пĕркеленчĕксенчен.** 1 кашăк хăйма, 1 çăмарта, 2 тумлам олива çăвĕ, 1 кашăк пыл, темиçешер тумлам лимонпа алоэ сĕткенĕ илмелле, хутăштармалла, 20 минутлăха пите сĕрмелле, çиелтен марльăпа витмелле.

Çак маскăна эрнере икĕ хут тусан хăвăр епле çамрăкланнине те сисмĕр.

**Тăпăрчă хутăшĕпе.** 2 чей кашăкĕ тăпăрчă, 1 кашăк пыл, 2-3 тумлам олива çăвĕ хутăштармалла. Маскăна 10 минутлăха пите сĕрмелле. Çапла кунсерен тусан ўт палăрмаллах çĕнелсе илемленĕ.

**Типĕ ўте** нўретме чĕрĕ çăмарта сарри лăкаса пите сĕрмелле. 15-20 минутран ăшă шывпа çуса ямалла.

**Çуллă ўте** кăшт лимон сĕткенĕ е пыл хушнă çăмарта шуррипе сĕрмелле. **Йĕркеллĕ ўте** çăмарта шуррипе саррине уйăрмасăр лайăх лăкаса сĕрмелле.

*Кăвакал çиме кай та хурна янтăла.*
*Пĕчĕк хуранăн пăтти тутлă, пĕчĕк пичкен сăри лайăх.*

*(Ваттисен сăмахĕ).*

## ПĔЛЕС ТЕНĔЧЧĔ

### Лавр йывăççĕ

**? Хисеплĕ редакци! «Хресчен сасси» хаçата юратса вулатăп. Ырă канашсем пичетлени, вулакансен ыйтăвĕсене хуравлани килĕшет. Ултă çул каялла Сочирен пĕчĕкçĕ лавр илсе килнĕччĕ. Метртан та çўлĕрех çитĕнсе кайрĕ. Апат пĕçернĕ чух çулçине тата-тата яратăп. Иртнĕ кĕркунне хайхине пысăкрах савăта куçарса лартрăм, тăпра хушрăм. Анчах лавр саркаланса ўсес вырăнне йăшма пуçларĕ: çулçисем çаврăнса пĕтĕрĕнмĕ, хуралма пуçларĕç. Мĕнле çăлса хăвармалла-ши?**

**Л. СЕМЕНОВ. Красноармейски районĕ, Йўçкасси.**

Пўлĕмре ўстерекен лавр йывăçне пыйтă тапăнма пултарать. Ун пек чухне супăнь хушнă табак шывĕпе (1 л шыва 5-10 г табак, 3-5 г супăнь) сирпĕтмелле. Вĕтĕ хурткăпшанкă (щитовка) та кăмăллать ăна. Çулçăсем пĕтĕрĕнни ахăртнех çавăнпа çыхăннă та. Супăнь кăпăкĕ пулăшма пултарĕ. Губкăна супăньпе сĕрсе мĕн пур çулçăпа тунана лектерсе тухмалла. Çакăн хыççăн темиçе кунтан лавр йывăçне ăшă шывпа çумалла.

Лавр йывăççĕ пĕтес хăрушлăх пулсан ăна туратĕнчен тепĕр хут ўстерме май пур. Çуркунне, пуш уйăхĕнче, пĕр çул ўссе хытнă турата касса (8-10 см) нўрлĕ хăйăр ăшне чиксе тымарлантармалла. Турачĕ çинче 3-4 çулçă пулмалла. Нўрĕк тытма турата пленкăпа витме е кĕленчепе хуплама юрать. Тымарлантарнă турата çерем тăпри, компост, хăйăр (3:2:1) хутăшне лартмалла. Тўрех пысăк чўлмеке лартмалла мар. Пĕчĕккине вăл лайăхрах ўсет. Ăна кунне 1-2 хут шăвармалла. Ўснĕ вăхăтра уйăхра 1-2 хут минерал удобренийĕпе апатлантармалла. Кĕркунне сайра хутра çеç шăвармалла. Хĕлле ăна чи сивĕ чўрече ани çине лартмалла.

### Канлĕ пултăр

**? Краватьпе матрас туяннă чухне мĕн пăхмалла?**

Матрас ытла хытă пулмалла мар. Ун çине выртса пăхмалла – канлĕ-и? Çурăм çине выртăр. Алла çурăм айне чикме пултарсан (çапах та йăпăш кĕрсе ан кайтăр вăл), пĕр енчен тепĕр енне çăмăллăнах çаврăнайсан матрас тивĕçтерет. Май килсен матрасĕпе кравачĕне пĕрлех илмелле, меллĕрех пулĕ.

## ШУТА ИЛМЕ

• Кроссовкăран тар шăрши кĕрет-и? Унăн ăшне 1-2 кашăк апат соди хурăр. Çĕр каçа вăл усал шăрша пĕтĕмпех туртса илĕ.

• Тăварланă хăяр-помидор савăтне тимĕр хупăпа хупиччен горчица вăрри хурсан тăвар шывĕ пăтранчăк пулмĕ, сирпĕнмĕ те.

• Çĕнĕ стакан вĕри шыв янипе ан çурăлтăр тесен кастрюль тĕпне 3 см хулăнăш хаçат хучĕ хумалла, ун çине стакансене лартса сивĕ шыв ямалла. Йăваш çулăм çинче вĕреме кĕртмелле. Шывĕ сивĕнмесĕр те кăлармалла мар. Çапла тусан стаканшăн нимĕнле вĕри шыв та хăрушă мар.

**«Кил», «Сывлăх», «Тĕпел» кăларăмсене Елена НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.**

## ЧĂВАШ НАЦИ РАДИО ПРОГРАММИ (72,41 УКВ, 105 FM хумсем çинче)

**Тунти кун, пуш уйăхĕн 17-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 19.30-20.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 8.10-8.30, 11.10-11.30, 15.10-15.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00, 15.30-16.00 Çĕр сум. (12+) 9.10-10.00 Женская среда. (12+) 10.10-10.30, 22.10-22.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+)10.30-11.00 Шурăм пуç. (12+) 11.30-12.00 Ялтан яла. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 16.10-17.00 Марафон: дни национального радио в городах и районах республики (к 5-летию Национального радио Чувашии) (12+) 17.30-18.00 Шуракăш. (12+) 18.30-19.00 Тема дня. (12+) 20.30-21.00 Сказочный вечер. (12+) 21.30-22.00 Çемье ăшши. (12+) 22.10-23.00 Янра юрă! (хит-парад). (12+) 23.30-24.00 Присягая Родине. (12+)
**Çĕнĕ юрă** – 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10,10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10,15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05- 20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Тунти кун – эрне кун**

6.00, 7.00, 12.00, 13.00, 15.00, 18.00, 20.00 22.00 – Хыпарсем. (12+)
8.00, 9.00, 11.00, 14.00, 16.00, 17.00, 19.00, 21.00, 23.00 – Новости. (12+)

**Ытлари кун, пуш уйăхĕн 18-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 21.30-22.00 Голос Республики. (12+) 8.10-8.30, 9.10-9.30, 10.10-10.30, 11.10-11.30, 15.10-15.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00 Ялтан яла. (12+) 9.30-10.00 Социальный вопрос. (12+) 10.30-11.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 11.30-12.00, 22.30-23.00 Çемье ăшши. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-14-15.00 Янра юрă! ( хид-парад). (12+) 15.30-16.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 16.10-16.30 Эстрадный концерт. (12+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.30-18.00 Çĕр сум. (12+) 18.30-19.00 Тăван ăс-хакăл. (12+) 19.10-20.00 Чунлă эфир. (12+) 20.30-21.00 Сказочный вечер. (6+)
**Çĕнĕ юрă** – 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Юн кун, пуш уйăхĕн 19-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00 Голос Республики. (12+) 8.10-8.30,10.10-10.30, 11.10-11.30, 14.10-14.30, 15.10-15.30, 16.10-16.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30, 20.10-20.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00, 19.30-20.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 9.10-10.00 Женская среда. (12+) 10.30-11.00 Çĕр Сум. (12+) 11.30-12.00 Тăван ăс-хакăл. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.30-15.00 Экономика Чувашии. (6+) 15.30-16.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.10-18.00 Пĕччен мар. (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 20.30-21.00 Сказочный вечер. (6+) 21.10-22.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 22.10-23.00 Путешествие в историю чуваш. (12+)
**Çĕнĕ юрă** – 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Кĕçнерни кун, пуш уйăхĕн 20-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 8.30-9.00 Голос Республики. (12+) 22.30-23.00 Радиобиблиотека. (12+) 8.10-8.30, 9.10-9.30, 14.30-15.00, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30, 20.10-20.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 9.10-10.00 Чунлă эфир. (12+) 10.10-11.00 Пĕччен мар. (12+) 11.10-12.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-14.30 Азы православия. (12+) 15.10-16.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 16.10-16.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.30-18.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 18.30-19.00 Тăван ăс-хакăл. (12+) 19.30-20.00 Сказочный вечер. (6+) 20.30-22.00 Çичĕ юрă. (12+)
**Çĕнĕ юрă** – 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Эрне кун, пуш уйăхĕн 21-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00 Радиобиблиотека. (12+) 10.10-10.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.10-9.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 9.10-10.00 Театральный абонемент. (12+) 10.30-11.00 Тăван ăс-хакăл. (12+) 11.10-11.30, 16.10-16.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 11.30-12.00 Пултарулăх çулĕпе. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Иксĕлми çăлкуçсем. (12+) 15.10-16.00 Пачăшкă сăмахĕ. (12+) 16.10-17.00 Социальный вопрос. (12+) 17.10-17.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 17.30-18.00 Чĕрере çуралнă сăвăсем. (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 19.30-20.00 Присягая Родине. (12+) 20.10-24.00 Каçхи микс. (12+)
**Çĕнĕ юрă** – 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Шăмат кун, пуш уйăхĕн 22-мĕшĕ**

6.05-7.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 7.05-7.30, 8.05-8.30, 10.05-10.30, 16.05-16.30, 18.05-18.30, Юрă вăчăри. (12+) 7.30-8.00 Ялтан яла. (12+) 8.30-9.00 Радиобиблиотека. (12+) 11.05-11.30, 17.05-17.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 9.05-9.30, 15.30-16.00 Социальный вопрос. (12+) 9.30-10.00 Рабочая смена. (12+) 10.30-11.00, 16.30-17.00 Символ веры. (12+) 11.30-12.00 Ачалăх урхамахĕ. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.05-15.00 Радиотеатр. 1 пайĕ. (12+) 15.05-15.30 Пултарулăх çулĕпе. (12+) 17.30-18.00 Шурăм пуç. (12+) 18.30-19.00 Вăрман кĕвви. (12+) 19.05-19.30 Кĕрекене пуçтарăнсан. (12+) 19.30-20.00 Уйăхпи юмахĕ. (6+) 20.05-24.00 Каçхи микс. (12+)
**Çĕнĕ юрă** – 6.05-6.10, 7.00-7.05, 8.00-8.05, 9.00-9.05,10.00-10.05, 11.00-11.05, 14.00-14.05,15.00-15.05,16.00-16.05,17.00-17.05,18.00-18.05,19.00-19.05

**Вырсарни кун, пуш уйăхĕн 23-мĕшĕ**

6.05-7.00 Пултарулăх çулĕпе. (12+) 7.05-7.30, 9.05-9.30,18.05-18.30, 20.05-20.30 Юрă вăчăри. (12+) 7.30-8.00 Чĕрĕлĕх çути. (12+) 8.05-8.30, 11.05-11.30, 15.05-15.30, 17.05-17.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 8.30-9.00 Радиобиблиотека. (12+) 9.30-10.00 Тема дня. (12+) 10.05-11.00 Çичĕ юрă. (12+) 11.30-12.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.05-15.00 Радиотеатр. 2 пайĕ. (12+) 15.30-16.00 Социальный вопрос. (12+) 16.05-17.00 Шурăмпуç. (12+) 17.05-18.00 Неформат. (12+) 18.30-19.00 Сирĕн сад-пахча. (12+) 19.05-20.00 Янра юрă! (хит-парад). (12+) 20.30-21.00 Сказочный вечер. (6+) 21.05-24.00 Каçхи микс. (12+)
**Çĕнĕ юрă** – 6.05-6.10, 7.00-7.05, 8.00-8.05, 9.00-9.05,10.00-10.05, 11.00-11.05, 14.00-14.05,15.00-15.05,16.00-16.05,17.00-17.05,18.00-18.05,19.00-19.05


## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРЎСЕМ

### ПРОДАЮ

**2. АКЦИЯ! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 89196543499.

**3. АКЦИЯ! Кольца колодезные** диам. 0,7 м, 1 м, 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 89196543499.

**4. Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка. Без вых. **Т. 8-987-576-65-62.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого; **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**7. Срубы для бани.** Доставка по ЧР. Т. 372874.

**9. Гравмассу, песок, щебень,** керамзит, кирп. бой. Т. 89033583021.

**14. Станки для валяния валенок.** Т.: 89278617589, 89373810585.

**15. Кирпич, брусчатку, кольца,** ОПГС, песок, КБ. Т. 89613393363.

**16. Сетку-рабицу** от произ-ля, черную, зеленую, оцинкованную – около 100 видов, сетку сварную, **столбы,** скобы, **проволоку,** калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 89379522211.

**20. Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Найдете дешевле – уступим. Без. вых. Т. 89625989686.

**19. Гравмассу, песок, щебень,** торф, кирп. бой. Т. 8-903-322-57-66.

**22. ОКНА пластиковые, железные ДВЕРИ.** Реально низкие цены. Гарантия. Т. 89871267170.

**23. Гравмассу,** песок, бой кирпича, **щебень.** Доставка. Тел. 89061355241.

**24. ГРАБЛИ, косилки, сажалки,** копалки, окучники, опрыскиватели. Доставка. Т. 89278533596.

**33. Гравмассу, песок, керамзит,** щебень, торф. Доставка. Т. 89053465671.

**35. Блоки керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. Т. 89373866629.

**45. Песок, гравмассу, щебень.** Д-ка. Т. 89196543499.

## ТУНТИ КУН, 17

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.00, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15, 4.10 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
13.45 «Истина где-то рядом» 16+
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить» 16+
15.15 «Они и мы» 16+
16.10, 3.15 «В наше время» 12+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «ДУРНАЯ КРОВЬ» 16+
23.30 «Вечерний Ургант» 16+
0.10 «Познер» 16+
1.10, 3.05 Х/ф «ОСТРОВ» 16+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00 «Диалог со смертью. Переговорщики» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.30, 14.30, 17.10, 19.40 Местное время
11.50, 14.50 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 Т/с «ДЖАМАЙКА» 12+
16.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 Т/с «ЛИЧНОЕ ДЕЛО» 16+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «ТАМ, ГДЕ ТЫ» 12+
23.50 «Секретные материалы: ключи от долголетия»
0.45 «Девчата» 16+
1.30 Т/с «ВАРИАНТ «ОМЕГА»
3.00 Т/с «ЗАКОН И ПОРЯДОК-19» 16+
3.50 Комната смеха

### ЧТВ

14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.10-17.30 Вести-Чăваш Ен
19.40-20.00 Вести-Чувашия

### РОССИЯ К

7.00 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.30 Новости культуры
10.15, 1.40 «Наблюдатель»
11.15 Т/с «ПЕРРИ МЭЙСОН»
12.10 «Линия жизни»
13.10 Д/ф «Большая свадьба Фаизы»
14.00 Д/ф «Карл Фридрих Гаусс»
14.10 Т/с «В ЛЕСАХ И НА ГОРАХ»
15.10 Х/ф «БЕРЕГ»
17.25 Д/ф «Тихий гений. Александр Попов»
18.10 Academia
19.15 Главная роль
19.30 «Сати. Нескучная классика...»
20.10 «Правила жизни»
20.40 «Острова»
21.20 «Тем временем»
22.05 Д/ф «Первый компьютер мира»
23.00 «Крестьянская история»
23.50 «Кинескоп»
0.30 Д/ф «Дом Марины»
1.25 «Мировые сокровища культуры»
2.35 Рихард Штраус. Симфоническая поэма «Дон Жуан»

## ЫТЛАРИ КУН, 18

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.00, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15, 4.25 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
13.45 «Истина где-то рядом» 16+
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить» 16+
15.15 «Они и мы» 16+
16.10, 3.30 «В наше время» 12+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «ДУРНАЯ КРОВЬ» 16+
23.30 «Вечерний Ургант» 16+
0.10 «Мужчина и женщина»
1.10, 3.05 Х/ф «ИЗ АДА» 18+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00 «Пятая графа. Эмиграция»
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.30, 14.30, 17.10, 19.40 Местное время
11.50, 14.50 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 Т/с «ДЖАМАЙКА» 12+
16.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 Т/с «ЛИЧНОЕ ДЕЛО» 16+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «ТАМ, ГДЕ ТЫ» 12+
22.55 Специальный корреспондент 16+
23.55 «Территория страха» 12+
1.00 «Честный детектив» 16+
1.35 Т/с «ВАРИАНТ «ОМЕГА»
3.00 Т/с «ЗАКОН И ПОРЯДОК-19» 16+
4.00 Комната смеха

### ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш Ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
9.00 Утренний гость (на чувашском языке)
9.30 Сельская жизнь
9.40-9.55 Вспомни, солдат (на чувашском языке)
11.30-11.50 Вести-Чăваш Ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.10-17.30 Вести-Чăваш Ен
19.40-20.00 Вести-Чувашия

### РОССИЯ К

6.30 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.30 Новости культуры
10.15, 1.55 «Наблюдатель»
11.15 Т/с «ПЕРРИ МЭЙСОН»
12.10, 20.10 «Правила жизни»
12.40 «Пятое измерение»
13.10 Д/ф «Первый компьютер мира»
14.05 Д/ф «Фидий»
14.10 Т/с «В ЛЕСАХ И НА ГОРАХ»
15.10, 23.50 Х/ф «АЛИСА В СТРАНЕ ЧУДЕС»
16.25 «Острова»
17.05 Мастера фортепианного искусства. Денис Мацуев
17.55 «Мировые сокровища культуры»
18.10 Academia
19.15 Главная роль
19.30 Власть факта
20.40 «Больше, чем любовь»
21.25 «Игра в бисер»
22.05 Д/ф «Мир, затерянный в океане»
23.00 «Крестьянская история»
1.10 П.И. Чайковский. «Времена года» Исполняет Денис Мацуев
1.50 Д/ф «Стендаль»

## ЮН КУН, 19

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.00, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15, 4.10 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
13.45 «Истина где-то рядом» 16+
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить» 16+
15.15 «Они и мы» 16+
16.10, 3.15 «В наше время» 12+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «ДУРНАЯ КРОВЬ» 16+
23.30 «Вечерний Ургант» 16+
0.10 «Политика» 18+
1.10, 3.05 Х/ф «Я - ЧЕТВЕРТЫЙ» 16+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00 «Шум земли»
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.30, 14.30, 17.10, 19.40 Местное время
11.50, 14.50 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 Т/с «ДЖАМАЙКА» 12+
16.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 Т/с «ЛИЧНОЕ ДЕЛО» 16+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «ТАМ, ГДЕ ТЫ» 12+
23.50 Т/ф «Тайна трех океанов» 12+
0.40 «Пропавшая субмарина. Трагедия К-129» 12+
1.45 Т/с «ВАРИАНТ «ОМЕГА»
3.15 Горячая десятка 12+
4.20 Комната смеха

### ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш Ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
11.30-11.50 Вести-Чăваш Ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.10-17.30 Вести-Чăваш Ен
19.40-20.00 Вести-Чувашия

### РОССИЯ К

6.30 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.30 Новости культуры
10.15, 1.55 «Наблюдатель»
11.15 Т/с «ПЕРРИ МЭЙСОН»
12.10, 20.10 «Правила жизни»
12.40 «Провинциальные музеи России» Зарайск
13.05 Д/ф «Мир, затерянный в океане»
13.55 Важные вещи. «Часы Меншикова»
14.10 Т/с «В ЛЕСАХ И НА ГОРАХ»
15.10, 23.50 Х/ф «ПРИКЛЮЧЕНИЯ БАРОНА МЮНХГАУЗЕНА»
17.10 Мастера фортепианного искусства. Элисо Вирсаладзе
17.55, 21.05 «Мировые сокровища культуры»
18.10 Academia
19.15 Главная роль
19.30 «Абсолютный слух»
20.40 Гении и злодеи. Анатолий Луначарский
21.20 Д/ф «Вадим Фиссон. Человек с неограниченными возможностями»
22.05 Д/ф «Метеоритная угроза»
23.00 «Крестьянская история»
1.50 Д/ф «Камиль Коро»

## КĔҪНЕРНИ КУН, 20

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.00, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15, 4.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
13.45 «Истина где-то рядом» 16+
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить» 16+
15.15 «Они и мы» 16+
16.10, 3.20 «В наше время» 12+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «ДУРНАЯ КРОВЬ» 16+
23.30 «Вечерний Ургант» 16+
0.10 «На ночь глядя» 16+
1.00, 3.05 Х/ф «ПЕРЕПРАВА» 18+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00 «Молога. Град обреченный» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.30, 14.30, 17.10, 19.40 Местное время
11.50, 14.50 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 Т/с «ДЖАМАЙКА» 12+
16.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 Т/с «ЛИЧНОЕ ДЕЛО» 16+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «ТАМ, ГДЕ ТЫ» 12+
22.55 Т/ф «Легкое дыхание Ивана Бунина» 12+
0.20 Х/ф «ПЕРВЫЙ ПОСЛЕ БОГА» 12+
2.25 Т/с «ВАРИАНТ «ОМЕГА»
4.00 Т/с «ЗАКОН И ПОРЯДОК-19» 16+

### ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш Ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
9.00 Активная молодежь
9.15 Родительский день
9.25-9.55 Виктор Петров. 30 лет на сцене. 1 часть (на чувашском языке)
11.30-11.50 Вести-Чăваш Ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.10-17.30 Вести-Чăваш Ен
19.40-20.00 Вести-Чувашия

### РОССИЯ К

6.30 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.30 Новости культуры
10.15, 1.55 «Наблюдатель»
11.15 Т/с «ПЕРРИ МЭЙСОН»
12.10, 20.10 «Правила жизни»
12.40 «Провинциальные музеи» «По родным местам Михаила Пришвина»
13.10 Д/ф «Метеоритная угроза»
14.00 Д/ф «Камиль Коро»
14.10 Т/с «В ЛЕСАХ И НА ГОРАХ»
15.10, 23.50 Х/ф «ВИЗ»
17.20 Мастера фортепианного искусства. Валерий Афанасьев
18.05 Д/ф «Стендаль»
18.10 Academia
19.15 Главная роль
19.30 «Острова»
20.40 «Кто мы?»
21.05 «Мировые сокровища культуры»
21.20 «Культурная революция»
22.05 Д/ф «Глаза пустыни Атакама»
23.00 «Крестьянская история»

## ЭРНЕ КУН, 21

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15, 5.20 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
13.45 «Истина где-то рядом» 16+
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить» 16+
15.15 «Они и мы» 16+
16.10 «В наше время» 12+
17.00 «Жди меня»
18.45 «Человек и закон» 16+
20.00 «Поле чудес» 16+
21.00 «Время»
21.30 «Голос. Дети»
23.40 «Вечерний Ургант» 16+
0.35 Х/ф «ПОБЕЖДАЙ!» 16+
2.30 Х/ф «НЬЮ-ЙОРКСКОЕ ТАКСИ» 16+
4.20 «Солнечные штормы»

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
8.55 Мусульмане
9.10 «В огнедышащей лаве любви. Светлана Светличная»
10.05 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.30, 14.30, 17.10, 19.40 Местное время
11.50, 14.50 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 Т/с «ДЖАМАЙКА» 12+
16.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 Т/с «ЛИЧНОЕ ДЕЛО» 16+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 «Поединок» 12+
22.50 «Живой звук»
0.40 Х/ф «ПРЕВРАТНОСТИ СУДЬБЫ» 12+
2.45 Т/с «ВАРИАНТ «ОМЕГА»
4.15 Комната смеха

### ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш Ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
9.10 Точка зрения
9.25-10.05 Для вас, любимые. Концерт по заявкам
11.30-11.50 Вести – ПФО
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.10-17.30 Вести-Чăваш Ен
19.40-20.00 Вести-Чувашия

### РОССИЯ К

6.30 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.40 Новости культуры
10.20 Х/ф «ВСЕ ЭТО - РИТМ»
11.35, 18.40, 2.40 «Мировые сокровища культуры»
11.55 «Правила жизни»
12.20 «Письма из провинции»
12.50 Д/ф «Глаза пустыни Атакама»
13.45 Х/ф «ШУМИ ГОРОДОК»
15.10 Д/ф «Вадим Фиссон. Человек с неограниченными возможностями»
15.55 Билет в Большой
16.35 Д/ф «Алтайские кержаки»
17.00 Мастера фортепианного искусства. Евгений Кисин
18.00 Д/ф «Город 2 (город Курчатов)»
19.15 Смехоностальгия
19.45, 1.55 «Искатели» «Сокровища Радзивиллов»
20.35 Документальный фильм
21.15 Х/ф «КОГДА ДЕРЕВЬЯ БЫЛИ БОЛЬШИМИ»
22.45 «Линия жизни»
0.00 Х/ф «ЛЮБОВЬ - ЭТО ДЬЯВОЛ. ШТРИХИ К ПОРТРЕТУ Ф. БЭКОНА» 18+
1.40 М/ф «Великолепный Гоша»

– Ремонт ТНВД
– Форсунки дизельные
– Компьютерная диагностика
– Капитальный и мелкий ремонт дизельных, легковых иномарок.
Тел.: 29-02-01, 8-927-667-17-34.
Реклама

## ШĂМАТ КУН, 22

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

6.00, 10.00, 12.00, 15.00, 18.00 Новости
6.10 Х/ф «КУПЛЮ ДРУГА» 16+
8.00 «Играй, гармонь любимая!»
8.50 «Смешарики. Новые приключения»
9.00 «Умницы и умники» 12+
9.45 «Слово пастыря»
10.15 «Смак» 12+
10.55 «Валентин Дикуль. «Встань и иди!» 12+
12.15 «Идеальный ремонт»
13.10 Х/ф «СВАДЬБА В МАЛИНОВКЕ»
15.15 «Соседские войны»
16.20 Х/ф «НА КРЮЧКЕ» 16+
18.15 «Кто хочет стать миллионером?»
19.15 «Золотой граммофон»
21.00 «Время»
21.20 «Сегодня вечером» 16+
23.00 «Что? Где? Когда?»
0.10 «Кабаре без границ» 16+
1.10 Х/ф «ШАОЛИНЬ» 16+
3.35 «В наше время» 12+

### РОССИЯ 1

4.50 Х/ф «ЗИНА-ЗИНУЛЯ»
6.35 «Сельское утро»
7.05 Диалоги о животных
8.00, 11.00, 14.00 Вести
8.10, 11.10, 14.20 Местное время. Вести-Москва
8.20 «Военная программа» Александра Сладкова
8.50 «Планета собак»
9.25 Субботник
10.05 «Моя планета» представляет. «Псковский кремль» «Иордания. Морское королевство»
11.20 Вести. Дежурная часть
11.55 «Честный детектив» 16+
12.25 Х/ф «СЮРПРИЗ» 12+
14.30 Шоу «Десять миллионов»
15.30 Субботний вечер
17.50 «Кривое зеркало» Театр 16+
20.00 Вести в субботу
20.45 Х/ф «КРАСОТКИ» 12+
0.30 Х/ф «ТЕЧЕТ РЕКА ВОЛГА» 12+
2.35 Х/ф «ВЫЛЕТ ЗАДЕРЖИВАЕТСЯ»
4.10 Комната смеха

### ЧТВ

8.10-8.20 Вести-Чăваш Ен
10.05 Для вас, любимые. Концерт по заявкам
10.50-11.00 Солнечный зайчик (на чувашском языке)
14.20-14.30 Вести-Чувашия

### РОССИЯ К

6.30 «Евроньюс»
10.00 Библейский сюжет
10.35 Х/ф «СИЛЬВА»
11.55 Д/ф «Сергей Мартинсон»
12.35 Большая семья. Юрий Грымов. Ведущие Юрий Стоянов и Александр Карлов
13.30 Пряничный домик. «Ивановские ситцы»
13.55 Д/ф «Борьба за выживание»
14.50 «Красуйся, град Петров!» Большой дворец в Петергофе
15.20 Х/ф «СКУКИ РАДИ»
16.45 К 100-летию со дня рождения Елены Фадеевой. «Осенние портреты»
17.10 Спектакль «ДОРОГАЯ ПАМЕЛЛА» театра «Ленком»
19.35 «Романтика романса» Алексею Фатьянову посвящается
20.30 Х/ф «БОГАТАЯ НЕВЕСТА»
22.00 «Белая студия» Павел Чухрай
22.40 Х/ф «КОНЕЦ РОМАНА»
0.25 РОКовая ночь с Александром Ф. Скляром. Jamiroquai. Концерт в Вероне

## ВЫРСАРНИ КУН, 23

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

6.00, 10.00, 12.00 Новости
6.30 Х/ф «ЖЕНИТЬБА БАЛЬЗАМИНОВА»
8.10 «Армейский магазин» 16+
8.45 «Смешарики. ПИН-код»
8.55 «Здоровье» 16+
10.15 «Непутевые заметки» 12+
10.35 «Пока все дома»
11.25 «Фазенда»
12.15 «Свадебный переполох» 12+
13.10 «Народная медицина» 12+
14.10 Т/с «ВАНГЕЛИЯ» 12+
18.00 «Точь-в-точь»
21.00 Воскресное «Время»
22.00 «Клуб Веселых и Находчивых» Высшая лига 16+
0.15 Х/ф «ПЛАНЕТА ОБЕЗЬЯН» 12+
2.30 Х/ф «ЗАСТРЯЛ В ТЕБЕ» 12+

### РОССИЯ 1

5.30 Х/ф «ПЯТЬ МИНУТ СТРАХА»
7.20 Вся Россия
7.30 Сам себе режиссер
8.20 «Смехопанорама» Евгения Петросяна
8.50 Утренняя почта
9.30 «Сто к одному» Телеигра
10.20 Местное время. Вести--Москва. Неделя в городе
11.00, 14.00 Вести
11.10 «Смеяться разрешается»
12.40, 14.30 Х/ф «СВОЯ ПРАВДА» 12+
14.20 Местное время. Вести--Москва
17.00 «Один в один»
20.00 Вести недели
21.30 Х/ф «УЙТИ, ЧТОБЫ ОСТАТЬСЯ» 12+
23.30 «Воскресный вечер с Владимиром Соловьевым» 12+
1.20 Х/ф «ПЕСОЧНЫЙ ДОЖДЬ» 12+
3.20 «Планета собак»
3.55 Комната смеха

### ЧТВ

10.20-11.00 Вести-Чувашия. События недели

### РОССИЯ К

6.30 «Евроньюс»
10.00 «Обыкновенный концерт с Эдуардом Эфировым»
10.35 Х/ф «ПОПРЫГУНЬЯ»
12.05 «Легенды мирового кино» Кирилл Лавров
12.30 «Россия, любовь моя!». «Ингушская свадьба»
13.00 Гении и злодеи. Александр Алехин
13.30 Д/ф «Совы. Дети ночи»
14.25 «Пешком...» Москва боярская
14.55 «Что делать?»
15.40 Геннадий Гладков «Обыкновенное чудо». Авторская версия мюзикла для симфонического оркестра
17.25 «Кто там...»
18.00 Итоговая программа «Контекст»
18.40, 1.55 «Искатели» «Сибирский НЛО-экспресс»
19.25 К юбилею киностудии. «Мосфильм» 90 шагов»
19.40 Х/ф «АННА ПАВЛОВА»
22.15 Анна Нетребко, Екатерина Губанова и Джозеф Каллея в спектакле Метрополитен-опера «СКАЗКИ ГОФМАНА»
1.05 Д/ф «Борьба за выживание»
2.40 «Мировые сокровища культуры»

## КУЛĂШ, ПУЛĂШ!

– Тухтăр, манăн арăмăн сасси пĕтсе ларнă. Мĕн тумалла-ши?

– Эсир килĕре çур çĕр иртни виçĕ сехетре таврăнса пăхăр.

## ЧĂХ ШĂРПИ

Америка ученăйĕсен шухăшĕпе – чăх шăрпи шăнса пăсăлнинчен, грипп ернинчен пулăшать. Унта пыр шыççине чакаракан ятарлă хими япалисем пур иккен. Çавăн пекех чăх шăрпинче сăмса тулса ларнине иртерме пулăшакан аминокислота пур. Чирлесен нимĕнле апат та анман чухне чăх шăрпи те пулин çимеллех.

## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРŸСЕМ

### ПРОДАЮ

**47. Керамблоки** 20х20х40 от производителя. Т.: 8-903-389-90-38, 48-92-77.

**49. Керамблоки, цемент, керамзит** в мешках – цены от производителя. Т. 8-905-344-79-32.

**53. Отруби, зерно, к/корм**. Д-ка. Т. 89613412236.

**59. Семена кормовой свеклы «ЛАДА»** высокой репродукции. Тел.: 8(8352) 73-39-11, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

**66. Заборы кованые.** Т. 389587.

**77. Теплицы: 3х6** – 12000 р., **3х8** – 15000 р. Доставка. Т. 48-16-54.

**60. СЕМЕНА** высокоурожайных **томатов, огурцов, перцев** и др. Тел.: 8(8352) 73-39-11, 75-80-34, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

**117. ОКНА ЧУВАШИИ.** Пластиковые окна, железные двери. Замер. Монтаж. Скидки. Т. 89050281182.

**150. Гравмассу, песок** речной – от 10 до 25 тн. рейс, керамблоки, керамзит. Доставка. Т.: 89176500385, 89603073399.

**153. Сеялку** ручную для посева лука-севка, моркови; **грабли** прицепные, **телегу** одноосную для лошади; **козу.** Т. 8-937-957-27-80.

**154. Грабли** от 24 тыс. руб., **плуги, картофелесажалки, окучники, фрезы, косилки.** Низкие цены. **Все новое!** Доставка! Тел.: 89278516858, 89379559802.

**159. ОКНА, ДВЕРИ «БАРС».** Заводское производство. Бесплатный замер. Рассрочка. Гарантия 10 лет. Скидки. Т. 89276689303.

### УСЛУГИ

**25. Установка забора** из профлиста, сетки-рабицы, секции ворот (распашные, откатные, автоматика). Гарантия. Тел. 8-917-651-80-57.

**43. Натяжные потолки** за 1 день. Т. 89373972442.

**63. Известный** Чебоксарский **экстрасенс,** маг, хиромант, астролог **Олег Боголюбов** решает любые жизненные проблемы. Т. 89674743783.

**152**. **Бурение** скважин на воду. Т. 89603021293.

«ХРЕСЧЕН САССИ»
Обществăпа политика хаçачĕ
Индекс 54838
Учредителĕ – ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви, «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ

ДИРЕКТОР-ТĔП РЕДАКТОР – А.П. ЛЕОНТЬЕВ
Редактор – Е.Н. НИКОЛАЕВА (тел. 56-34-63)
Редакци адресĕ: Шупашкар, И. Яковлев пр., 13.
Телефонсем: директор-тĕпредактор – 56-00-67, тĕп редактор çумĕ – 62-04-54, пайсем – 56-34-63, 62-50-06, 28-86-68, реклама пайĕ тел./факс – 28-83-70. Факс (8352) 62-50-06

www.hypar.ru,
e-mail: atal-volga@mail.ru

Хаçата 2013 çулхи раштав уйăхĕн 10-мĕшĕнче Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсемпе массăллă коммуникацисен сферинчи саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан службин Чăваш Республикинчи управленийĕ ПИ ТУ 21-00305 № регистрациленĕ.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă хатĕр оригинал-макетран «Чăваш ЕН» ИПК» АОУ типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар, И. Яковлев пр-чĕ, 13.

Графикпа 17 сехетре алă пусмалла.
17 сехетре алă пуснă.
Заказ 906 Тираж 22657

* Рекламăпа пĕлтерӳсем. Реклама тексчĕсемпе пĕлтерӳсемшĕн вĕсене паракансем явапллă.